26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ФЕВРАЛЬ
1
ЫТЛАРИКУН
22(6517) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 29-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Январĕн 29-мĕшĕнче ВОЛОСОВО хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре ЛЕНИНГРАД фронтĕнчи çарсем ăнăçлăн наступлени туса пынă, халăх пурăнакан 40 пункта ытла çапăçса тытса илнĕ, çав шутра ПЕРНОВО, БОЛЬШИЕ КОПОРКИ, МАЛЫЕ КОПОРКИ, ГОСТИЛОВО, ЮРЬЕВО, КОПОРЬЕ, ПОДОЗВАНЬЕ, ЗАРИНСКАЯ, ЛАМОХА, МАКЛАКОВА, БОЛЬШАЯ СИСТА, РАТЧИНО, ДОМАШОВО, ФАЛИЛЕЕВО, ПРУЖНИЦЫ, БОЛЬШИЕ ОЗЕРТИЦЫ, УЩЕВИЦЫ, ЗАГОРИЦЫ, БОЛЬШИЕ ХОТЫНИЦЫ, БОЛЬШИЕ СЯГЛИЦЫ ятлă ялсене тата КОПОРЬЕ, ВРУДА ятлă чугун çул станцийĕсене. ВОЛОСОВО хулинчен кăнтăртарахра пирĕн чăссем тăшманăн артиллери колоннине аркатса тăкнă. 105 тата 150 миллиметр калибрлă 60 тупă тытса илнĕ.

ГАТЧИНА хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 30 пункта ытла тытса илнĕ, çав шутра РАБИТИЦЫ, ДОМАШКОВИЦЫ, КАЛИТИНО, КАРГАЛОВА, ГЛУМИЦЫ, БОЛЬШОЕ ЗАРЕЧЬЕ, ТИХКОВИЦЫ, КАРТАШЕВСКАЯ, МАРГУСЫ, КУРОВИЦЫ, ВЫРИЦА ятлă ялсене тата ИЗВАРА, ЛИМОЖА, ПРИБЫТКОВО, КАРТАШЕВСКАЯ, СЕМЕНОВОДЧЕСКАЯ, ВЫРИЦА ятлă чугун çул станцийĕсене.

ВОЛХОВ фронтĕнчи çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, ЧУДОВО хулипе пысăк чугун çул узелне тытса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, ПОМЕРАНЬЕ, ТРУБНИКОВ БОР, БАБИНО, КОЛОМОВКА, СЯБРЕНИЦЫ, СЛОБОДА, СОСНИНСКАЯ ПРИСТАНЬ ятлă ялсене тытса илнĕ. Çапла вара МУСКАВА ЛЕНИНГРАДПА çыхăнтарса тăракан тĕп чугун çула — Октябрьски чугун çулне—пĕтĕмпех нимĕç захватчикĕсенчен тасатнă.

НОВГОРОДРАН хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, малалла куçса пынă, темиçе ял йышăнса илнĕ.

ВЕЛИКИЕ ЛУКИ хулинчен хĕвеланăçнерехре БАЛТИКА сывăхĕнчи 2-мĕш фронтри çарсем, кĕтмен çĕртен атакăласа, НОВОСОКОЛЬНИКИ хулипе пысăк чугун çул узелне тытса илнĕ, çавăн пекех тата темиçе ял йышăнса илнĕ.

ВИННИЦАРАН хĕвелтухăçнерехре тата ХРИСТИНОВКАРАН çурçĕртерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене сирсе-сирсе янă. Командовани хушнипе, халăх пурăнакан темиçе пункта хăварнă. Хаяр çапăçусенче тăшман сынсемпе техника тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк çухату тӳснĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче темиçе вырăнта тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Январĕн 28-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 120 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 23 самолетне персе ӳкернĕ.

ЯНВАРĔН 30-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Январĕн 30-мĕшĕнче ВОЛОСОВО хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем наступлени туса пынă, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 50 пункта ытла тытса илнĕ, çав шутра СИСТАПАЛКИНО, НОВОЕ УСТЬЕ, ГОЛОВКИНО, СЕМЕЙСКАЯ, КОПАНИЦА, КУПЛЯ, КОТЛЫ, ИЦЕПИНА, КЛИМОТИНО, ПЕРЕЛЕСЬЕ, НАРЯДОВА, УДОСОЛОВО, ТЮИМЦЫ, БОЛЬШОЕ РУДИЛОВО, ВОЙНОСОЛОВО, ПУМАЛИЦА, РАНОЛОВО, КАЙБОЛОВО, ВАЛЬЯ, ГУРЛЕВО, ЛЯЛИЦЫ, КОРПОВО, МАНУЙЛОВО, ЯСТРЕБИНО, СТАРЫЕ СМОЛЕГОВИЦЫ, НОВЫЕ СМОЛЕГОВИЦЫ, РАГУЛОВО, МОРОЗОВО, СЫРКОВИЦЫ, ЯБЛОНИЦЫ, ЛЕТОШИЦЫ, РУССКОВИЦЫ ятлă ялсене, МОЛОСКОВИЦЫ поселокне тата КОТЛЫ, ВЕЙМАРН (КИНГИСЕППРАН 12 километр хĕвелтухăçнерехре) чугун çул узелĕсене тата МОЛОСКОВИЦЫ чугун çул станцине тытса илнĕ.

ГАТЧИНА хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем халăх пурăнакан темиçе пункта çапăçса тытса илнĕ, çав шутра ВОЛНА, АЛЕКСЕЕВСКИЙ, ДАЙМИЩЕ, ЗАМОСТЬЕ, ВЫРА, ИЗОРА, КУРГИНО, ДРУЖНАЯ ГОРКА ятлă ялсене, РАБОЧИЙ ПОСЕЛОКА тата СИВЕРСКИЙ ятлă чугун çул станцине. Çав поселокпа СИВЕРСКИЙ станцинче маларах çапăçса илнĕ нимĕç гарнизонне пирĕн çарсем пĕтерсе тăкнă.

ЛЮБАНЬ хулинчен хĕвеланăçнерехре, кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем, тăшманăн вăрман çулĕсем çинчи инженерла чăрмавĕсене çĕнтерсе, малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 30 пункта ытла тытса илнĕ, çав шутра КЛЕТНО, БОРИСОВО СЛУДИЦА, ПОРОЖКИ, 1-МĔШ САВКИНО, 2-МĔШ САВКИНО, КОНЕЧКИ, БОЛЬШОЕ ЕГЛИНО, МАЛОЕ ЕГЛИНО, ФЕДОСЬИНО, БОЛЬШОЕ ВАСИЛЬЕВСКОЕ, ГУММОЛОВО, ЗАВОЛОЖЬЕ, РУССКАЯ ВОЛЖА ятлă ялсене тата КАСТЕНСКАЯ, ЕГЛИНО ятлă чугун çул станцийĕсене.

НОВГОРОДРАН хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, МЫСЕЛКА, ГАЛСТУХОВО, БОЛЬШИЕ КУСОНИ, ЧЕРНОЕ, ХРИПЦЫ, ЯКОВЛЕВА ГОРКА, НЕЖАТИЦЫ, ДЕДИНО, БОРКИ, БОЛЬШИЕ ШАТНОВИЦЫ, ВЕЛИКОЕ СЕЛО, ЗАКИБЬЕ ятлă ялсене тытса илнĕ.

НОВОСОКОЛЬНИКИРЕН хĕвеланăçнерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, малалла куçса пынă, темиçе ял йышăнса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă, артиллерипе минометсенчен персе тăнă, темиçе вырăнта тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Январĕн 29-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 72 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 25 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Волосово хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем ăнăçлăн наступлени туса пынă. Пĕр соединенин боецĕсем чугун çулсемпе шоссе çулĕсен Котлы ятлă пысăк узелне тытса илнĕ. Пирĕн ытти чаçсем Веймарн ятлă чугун çул узелне тытса илнĕ, ку станци Кингисепп хулинчен 12 километр хĕвелтухăçнерехре. Çавăн пекех тата Молосковицы ятлă чугун çул станцийĕпе шоссе çулĕсен узелне тытса илнĕ. Каялла чакакан тăшмана хăваласа пырса, пирĕн çарсем нимĕç пехотин пĕр полкне çити тата темиçе специальнăй подразделенине тытса илнĕ те аркатса тăкнă. Тупăсем, минометсем, пулеметсем тата ытти трофейăсем нумай тытса илнĕ. Совет танкĕсен пĕр ушкăнĕ тăшманăн пысăк обозне атакăланă. Танкистсем обоз хуралне пĕтерсе тăкнă та çар хатĕрĕсем турттарса пыракан темиçе çĕр лава тытса илнĕ.

* * *

Гатчина хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, малалла куçса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем çавăрса илмелли ăнăçлă маневр тунă та тăшманăн Сиверский ятлă рабочи поселокпа пысăк чугун çул станцине хӳтĕлекен гарнизонне çавăрса илнĕ. Нимĕçсем ку станцие питĕ хытă хӳтĕленĕ, пирĕн çарсене Гатчинăпа Луга хушшинчи чугун çулпа малалла куçса пыма чарса лартасшăн пулнă. Паян совет çарĕсем çавăрса илнĕ гитлеровецсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă. Каç пулса килнĕ тĕле Сиверский поселокпа станцие нимĕçсенчен тасатнă. Çавăрса илнĕ нимĕçсен гарнизонне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Любань хулинчен хĕвеланăçнерехре, кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем çапла наступлени туса пынă. Нимĕçсем вăрман çулĕсем çинче тĕрлĕ чăрмавсем тата тĕрлĕрен инженерла заграждениссем туса тултарнă. Вăрмансемпе, шурлăхсемпе нумай вырăнта кĕрешсе тата тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, совет боецĕсем халăх пурăнакан 30 пункта ытла тытса илнĕ. Уйрăм участоксенче пирĕн йĕлтĕрçĕсем ăнăçлă çапăçнă. Пĕр ялшăн пынă çапăçура йĕлтĕрçĕсем гитлеровецсен икĕ ротине пĕтерсе тăкнă. Боеприпас складне тытса илнĕ.

* * *

Новгород хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем тăшманăн темиçе контратакине сирсе янă та, малалла куçса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 800 вилли таран выртса юлнă. Нимĕçсенчен 3 танк, 10 тупă тата 2 боеприпас складĕ тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Новосокольники хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă, нимĕçсене пĕрекленĕ темиçе пунктран хĕссе кăларнă. Пирĕн çарсем ĕнер тытса илнĕ Новосокольники хулишĕн пынă çапăçура 2.000 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 6 танк, артиллери складĕ, 100 паровоз ытла, вагонсемпе цистернăсем нумай тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Нимĕç командованийĕ, Ровно облаçĕнчи совет партизанĕсем вăйлăн кĕрешнинчен хăраса ӳксе, партизансемпе кĕрешме çĕнĕрен карательнăй экспедици янă. Экспедици составĕнче СС полкĕ, артиллери дивизионĕ, 10 танк тата темиçе бронемашина пулнă. Партизансем тăшманăн темиçе атакине сирсе янă, вара вăрманта хаяр çапăçура гитлеровецсене 300 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Тупăсемпе тата танксене хирĕç пемелли пăшалсемпе персе, нимĕçсен 5 танкне çĕмĕрнĕ, пĕр бронемашинине тата 32 грузовикне çунтарса янă. Çапла вара, карательсен каялла чакма лекнĕ. Совет патриочĕсем вĕсенчен 2 тупă, 30 пулемет, 265 винтовкăпа автомат тата боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 258-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен Хĕрлĕ Çар енне куçнă гренадер Густав М. çапла каласа кăтартнă: «Эпĕ обер-лейтенант пулнă, Берлинри офицерсен шкулĕнче преподаватель пулса ĕçленĕ. Пĕрре эпĕ юлташсем хушшинче нимĕç командованийĕн кĕретĕнех суя хыпарсем пĕлтерекен сводкисенчен кулса илтĕм. Çавăншăн мана Берлин комендатури çумĕнчи çар судне парĕç. Суд мана офицертан кăларса салтаксен шутне кĕртрĕ те икĕ çуллăха тĕрмене хупса лартмалла турĕ. Эпĕ Гермейсгеймсри çар тĕрминче лартăм. Эпĕ ларакан камерăра 30 нимĕç офицерĕ ларатчĕ, вĕсен шутĕнче—капитан Ничке, обер-лейтенант Зандер тата ыттисем те пурччĕ. Вата фронтовика, тимĕр хĕрессемпе награлăланă Браун обер-лейтенанта Гитлера ухмах ефрейтор тенĕшĕн тĕрмене хупса лартнăччĕ. Браунăн ĕçне темскерле уйрăм суд пăхса тухнă, çавăн хыççăн вăл вара пачах çухалчĕ. Ноябрь уйăхĕнче мана тĕрмерен кăларчĕç те фронта «хамăн айăпа каçарттарма» ячĕç. Тĕрмере эпĕ çак юнлă вăрçа пуçласа янă Гитлер режимĕ пĕтессине татӑклăнах пĕлсе çитрĕм. Фронтра вара эпĕ май килсенех вырăссем енне куçрăм».

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Нефть промышленноçĕнче ĕçлекен работниксене Социализмлă Ĕç Геройĕн ятне парасси çинчен

Нефть ытларах кăларас, нефтьрен ытти продуктсем тăвас, нефть тапса тухакан çĕнĕ вырăнсене йĕрлесе тупас тата нефть кăлармалли шăтăксене пăраласа алтас тĕлĕшпе уйрăмах паха ĕçсем тунăшăн çаксене, Ленин орденĕпе «Çурлапа мăлатук» ылттăн медаль парса, Социализмлă Ĕç Геройĕн ятне парас:

1. Баба Курбан Кули оглы Бабазаде — «Азизбековнефть» трестчĕн главнăй геологне.

2. Сулейман Азад оглы Везирова — Азнефтекомбинат начальникне.

3. Рустам Азис оглы Рустамова — «Сталиннефть» трестчĕн шăтăксем пăраласа алтакан мастерне.

4. Иван Корнеевич Седина — Нефть Промышленноçĕн Халăх Комиссарне.

5. Андрей Алексеевич Трофимука — Башнефтекомбинатăн главнăй геологне.

6. Виктор Степанович Федорова — Грознефтекомбинат начальникне.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи январĕн 24-мĕшĕ.

СССР Союзĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн Х-мĕш Сессийĕ

Союз Совечĕн тата Национальноçсен Совечĕн 1944 çулхи январĕн 29-мĕшĕнчи ларăвĕсем çинчен

Информациллĕ пĕлтерӳ

Ĕнер, январĕн 29-мĕшĕнче, кăнтăрла 11 сехетре, СССР Верховный Совечĕн ларăвĕсем пулакан залра, Кремльре, Союз Совечĕн иккĕмĕш ларăвĕ пулса иртнĕ.

Ларăва Союз Совечĕн Председателĕ депутат А. А. Андреев председатель пулса ертсе пынă.

Союз Совечĕ кун йĕркин пĕрремĕш пункчĕ тăрăх, Союз Совечĕ бюджет комиссин содокладне итлет, содоклада депутат К. И. Николаева тăвать.

Союз Совечĕ бюджет комиссин содокладне итленĕ хыççăн СССР Союзĕн 1944 çулхи государство бюджечĕ тата 1940, 1941, 1942 çулсенчи государство бюджечĕсене мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен тунă доклада сӳтсе-явма тытăнать.

Ларура пренисенче çаксем тухса каланă: РСФСР Совнаркомĕн Председателĕ А. Н. Косыгин, депутат Л. Р. Корниец (Украина ССР-ĕ), депутат Б. Н. Черноусов (Мускав облаçĕ), депутат М. Курбанов (Таджик ССР-ĕ), депутат Н. С. Патоличев (Челябинск облаçĕ), депутат А. Абдурахманов (Узбек ССР-ĕ), депутат Т. И. Кулиев (Азербайджан ССР-ĕ), депутат Н. Ундасынов (Казах ССР-ĕ) тата депутат М. Родионов (Горький облаçĕ).

* * *

Каçхине 6 сехетре Национальноçсен Совечĕн иккĕмĕш ларăвĕ пулнă.

Ларăва Национальноçсен Совечĕн Председателĕ депутат Н. М. Шверник ертсе пынă.

Национальноçсен Совечĕ кун йĕркин пĕрремĕш пункчĕ тăрăх, Национальноçсен Совечĕ бюджет комиссийĕн содокладне итлет, содоклада депутат И. С. Хохлов тăвать.

Национальноçсен Совечĕ бюджет комиссийĕн содокладне итленĕ хыççăн СССР Союзĕн 1944 çулхи государство бюджечĕ тата 1940, 1941, 1942 çулсенчи государство бюджечĕсене мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен тунă доклада сӳтсе-явма тытăнать.

Ларура пренисенче çаксем тухса каланă: депутат А. Казакпаев (Казах ССР-ĕ), ĕççынни депутачĕсен Мускав хули совечĕн исполкомĕн председателĕ В. П. Пронин юлташ, депутат А. Б. Бердыев (Туркмен ССР-ĕ), депутат Г. А. Динмухаметов (Тутар АССР-ĕ), ССР Союзĕн сывлăха сыхлав Халăх Комиссарĕ Г. А. Митерев юлташ, депутат Л. Г. Осипян (Армян ССР-ĕ), депутат И. С. Грушецкий (Украина ССР-ĕ), Киргиз ССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. Токобаев юлташ тата депутат П. С. Прокконен (Карело-Финн ССР-ĕ).

Союз Совечĕн ларăвĕ

Январĕн 29-мĕшĕнче ССР Союзĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн Х-мĕш Сессийĕ хăйĕн ĕçне малалла туса пынă. Ирхине 11 сехетре Союз Совечĕн ларăвĕ пуçланнă.

Председатель сĕтелĕ умĕнче — Союз Совечĕн Председателĕ—А. А. Андреев депутат тата Союз Совечĕн Председатель заместителĕсем—Т. Д. Лысенко тата У. Юсупов депутатсем.

Ложăсенче—СССР Верховный Совет Президиумĕн членĕсемпе Правительство членĕсем. Депутатсемпе хăнасем вĕсене алă çупса кĕтсе илеççĕ.

Союз Совечĕн Председателĕ А. А. Андреев депутат содоклад тума Союз Совечĕн бюджет комиссийĕн председательне К. Николаева депутата сăмах парать.

Николаева юлташ государствăн 1944 çулхи бюджетне вăрçă, хуçалăх тата политика задачисемпе пĕтĕмĕшпех килĕшӳллĕн тунă,—тесе палăртать.

— 1944 çулхи нумай миллиардлă бюджет,—тет вăл, — нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç çĕнтерӳллĕн кĕрешмелли финанс никĕсĕ пулса тăрать. Ылханлă тăшмана хăвартрах аркатса тăкма мĕн кирлĕ, бюджетăн çавăн валли укçа-тенкĕ пĕр вĕçĕмсĕр парса тăмалла.

Николаева юлташ çапла калать: вăрçă туса пырас ĕçĕн нушисем валли правительство тума палăртнă расходсене Союз Совечĕн бюджет комиссийĕ тĕрĕс те кирлĕ тесе шутлать. Çавăн пекех халăх хуçалăхне аталантарас ĕçпе социаллă-культурăллă мероприятисем валли укçа-тенкĕ уйăрса хунине ырласа, Николаева юлташ: çак укçа-тенкĕ вăл 1944 çул промышленноçа, транспорта, ял хуçалăхне, наукăна, культурăпа искусствăна çĕнĕрен çĕклемелли çул талăк пулассине, халăха хут вĕрентес тата халăх сывлăхне сыхлас ĕçсенче çĕнĕ çитĕнӳсем тумалли çул талăк пулассине кăтартса парать,—тесе палăртать.

Николаева юлташ бюджетнăй комисси ячĕпе бюджетăн тупăшсен пайне 4.010 миллион тенкĕ ӳстерме сĕнӳ парать. ССР Союзĕн 1944 çулхи государство бюджечĕн расход пайĕ пирки бюджет комиссийĕ нимĕнле улшăнусем те кĕртмест тата расходсене ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă суммăсем чухлĕ çирĕплетет.

Николаева юлташăн çак юлашки сăмахĕсене депутатсемпе хăнасем кумайччен алă çупса ответлеççĕ:

— Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç эпир туса пыракан кĕрешӳĕн кашни сехечĕ çĕнтерӳ тăвас сехете çывхартса пырать. Совет халăхĕ çак çĕнтерӳве пирĕн аслă çулпуçăмăр, учитель—тăван Сталин аслăн ертсе пынипе тăвать!

Союз Совечĕ государство бюджетне сӳтсе-явма тытăнать.

Председатель пулса ертсе пыракан РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председательне А. Н. Косыгин юлташа сăмах парать.

— Пирĕн çĕршыв оборонин нушисем валли 128.400 миллион тенкĕ укçа пама сĕннисене,—тет Косыгин юлташ,—совет халăхĕ пĕр кăмăлпа ырлать. РСФСР бюджечĕн тĕслĕхĕ çинче, унта социаллă-культурăллă мероприятисем валли пĕтĕм расходăн икĕ виççĕмĕш пайне усă курма пăхнă, Косыгин юлташ халăха хут вĕрентес тата халăх сывлăхне сыхлас ĕçсене малалла аталантарса пырас сишĕн партипе правительство тăрăшнине паллă тăвать.

Косыгин юлташ малалла РСФС Республикин нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районĕсене ура çине тăратас тĕлĕшпе тумалли питех те пысăк ĕç çинчен калать, промышленноçа аталантарассипе тата РСФСР хулисенчи коммуналлă хуçалăха аталантарассипе çыхăнса тăракан практикăллă чылай ыйтусем кăларса тăратать.

Ун хыççăн Л. Р. Корниец депутат сăмах тухса калать.

— Нимĕç вăрă-хурахĕсем хăйсене Днепрăн сулахай çыранĕнчи Украинăран хăваласа кăлариччен, — тет Корниец юлташ,—Днепр патĕнче нумайччен ларма, хăйсен аллинче Украина столицине—Киева тытса тăма шутланă. Хĕрлĕ Çар Днепр шывĕ урлă ăнăçлăн каçрĕ, нимĕçсене Днепр хыçне тата Киевран шăлса сирпĕтрĕ. Ирĕке кăларнă Киевра халĕ—УССР Верховный Совечĕн Президиумĕ, УССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тата Украинăри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральнăй Комитечĕ.

Çак пĕлтерӳве депутатсемпе хăнасем тăвăллăн алă çупса кĕтсе илеççĕ.

— Кĕçех,—тет малалла Корниец юлташ,—пĕтĕм Украинăна, хамăрăн пĕтĕм çĕре нимĕç оккупанчĕсенчен тасатса çитеретпĕр, вара Украина халăхĕ аслă ССР Союзĕнчи халăхсен тăванлă çемьинче каллех ирĕклĕ те хавалслă пурăнма пуçлĕ.

Корниец юлташ çакна савăнса палăртать: ССР Союзĕн 1944 çулхи государство бюджечĕ нимĕç захватчикĕсем шĕлтернĕ халăх хуçалăхне юсас задачăна, уйрăмăн илсен, Днепр шывĕн сулахай енчи Украинăри промышленноçа, ялхуçалăхне, суту-илӳ ĕçне, коммуналлă хуçалăха тата халăх хуçалăхĕн ытти отраслĕсене те юсаса ура çине тăратас задачăна пĕтĕмпех пурнăçа кĕртме май парать. Днепр шывĕн сулахай енчи Украинăри хуçалăха юсаса ура çине тăратма пĕр миллиард тенке яхăн укçа пама палăртнă. Çакă вăл Украинăра оборона валли промышленноçть продукцийĕ тата ялхуçалăх продукчĕсем туса кăларассине, ĕççыннисем валли кулленхи кирлĕ таварсем туса кăларассине 1944 çултах йĕркелеме май парать.

Корниец депутат сессирен Украинăн 1944 çулхи государство бюджетне Украинăн пурăнмалли çуртйĕрпе коммунальнăй хуçалăх халăх комиссариатне пулăшма 170 миллион тенкĕ уйăрса хăварма ыйтать.

Б. Н. Черноусов депутата сăмах параççĕ. Вăл Мускав облаçĕнчи ĕççыннисен нимĕçсен фашистла захватчикĕсене Мускав облаçĕнчен хăваласа кăларнăранпа иртнĕ икĕ çул талăк хушшинчи хастарлă ĕçĕн итогĕсене каласа парать.

— ССР Союзĕн кашни гражданинĕ,—тет Черноусов юлташ,—ирĕке кăларнă районсенчи хуçалăха юсамашкăн бюджетра укçа-тенкĕ пама палăртнине тулли кăмăлпа кĕтсе илĕ. Çакă вăл нимĕçсен пусмăрĕнчен хăтарнă çыннисемшĕн сталинла тăрăшнине, вăрçă условийĕсенчех хуçалăха юсас тĕлĕшпе питех те пысăк ĕçсем тăвассине сарса пыма пултаракан совет строй вăйне кăтартса парать.

М. Курбанов депутат хăйĕн сăмахĕнче вăрçăра ССР Союзĕнчи мĕнпур халăхсем пĕтĕçнине, вĕсем хамăрăн мухтавлă Тăван çĕршыв чысĕшĕн, ирĕклĕхĕшĕн тата никама пăхăнманлăхĕшĕн хăйсен пĕтĕм вăйĕсене пама хатĕр тăнине палăртать.

Курбанов юлташ малалла Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ ыйтнисене тивĕçтерес, нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи халăх хуçалăхне юсаса ура çине тăратас, фронтовиксен çемьисене тата Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене пулăшас енĕпе укçа-тенкĕ расходлама палăртнине пĕтĕмпех ырласа, Таджик республикин бюджечĕ çинчен каласа парать. Таджик республикин бюджечĕ, 1943 çулхипе танлаштарсан, 30,1 процент чухлĕ ӳсет. Таджик халăхĕ вăрçă условийĕсенче те ялхуçалăхĕпе культурăна малалла хăварт аталантарса пырать.

Н. С. Патоличев депутат хăйĕн сăмахĕнче Хĕрлĕ Çара хĕçпăшалсемпе боеприпассем парса тăракан хăзатлă çăлкуçĕ пулса тăракан индустриллĕ Уралти промышленноçть аталанса пынине çутатса парать.

А. Абдурахманов депутат Узбек ССР бюджечĕ Узбекистанăн халăх хуçалăхне хăвăрттăн аталантарма май пани çинчен калать. Вăрçă çулĕсенче республикăра промышленноçть продукцийĕ туса кăларасси пĕрре çурă хут ӳснĕ. Йывăр промышленноçăн вырăнĕ ӳссе пынă. Нефть кăларасси икĕ хут ӳснĕ. Республикăра хăйсен çĕркăмрăк базине тата металлурги промышленноçĕ тунă. Вăрçă çулĕсенче 4 электростанци туса ĕçе кĕртнĕ, халĕ тата 10 электростанци тăваççĕ. Вăл шутра узбек халăхĕн савăнăçĕ—Фархадри гидроэлектростанци. Вăрçă çулĕсенче республикăн ялхуçалăхне çур миллиард тенке яхăн укçа хывнă. Акмалли çĕр лаптăкĕн хисепне 800 пин гектар чухлĕ аслăлатнă, тырпул туса илесси икĕ хут ӳснĕ.

Депутат Кулиев юлташ Хĕрлĕ Çар Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче тунă çитĕнӳсем Совет государствин тĕнчери авторитетне нихăçанхинчен те ытларах сĕклени çинчен калать.

— Хĕрлĕ Çарăн иксĕлми çăлкуçĕн вăйĕ вăл,—тесе калать малалла Кулиев юлташ, — ССР Союзĕнчи халăхсен туслăхĕ пулса тăрать.

Çав иксĕлми союзра азербайджан халăхĕ хăйĕн тăван çĕршывĕ умĕнчи тивĕçне тӳррĕн те пăхăнса пурнăçа кĕртсе пырать.

Кулиев юлташ, 1944 çулхи бюджет нимĕç захватчикĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех çĕнтерме пирĕн халăхăн мĕнпур вăйĕсене çĕнĕрен пухассине пĕлтерни çинчен каласа, бюджет комиссийĕ тунă тӳрлетӳсене кĕртсе бюджета çирĕплетме сĕнет.

— Казахстан ĕççыннийĕсем, вăйхăвата шеллемесĕр ĕçлесе тата çĕршыв оборони валли укçа-тенкĕ парас ĕçе хутшăнса, Тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен патриотла тивĕçне чыслăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ, — тет Н. Ундасынов депутат.

Казахстанран ир те, каç та продуктăсем, боеприпассем, хĕçпăшалсем тата кăмрăк тиенĕ поездсем каяççĕ. Карагандăри бассейн кăмрăк кăларассине, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 38 процент ӳстернĕ. Сайра хутра çеç тĕл пулакан металсем кăларассине самаях ӳстернĕ. Промышленноçăн çĕнĕ строительстви анлăн сарăлса пырать. Казахстанри

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

ССР Союзĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн X-мĕш Сессийĕ

Союз Совечĕн ларăвĕ

Юлашки

колхозсем 1943 çулта тырпул акакан çĕр лаптăкне, 1940 çулхипе танлаштарсан, 415.000 гектар чухлĕ ÿстернĕ.

М. И. Родионов депутат 1944 çулхи бюджета пурнăçа кĕртни хамăрăн государствăн оборона вăйхăватне тĕреклетес ĕçе халăх хывакан çĕнĕ вклад пулни çинчен, пĕтĕм халăх фронта пулăшнине кăтартни пулса тăни çинчен калать. Оратор халĕ совет халăхĕ çĕршывăн вăрçă ыйтăвĕсене тивĕçтерме укçа-тенкĕ парас тĕлĕшпе мĕнле ĕçленине Горьки облаçĕн тĕслĕхĕсемпе кăтартса парать.

1944 çулхи бюджетра палăртнисене пĕтĕмпех ырласа, Родионов юлташ культурăпа йăла строительстввине тата фронтовиксен çемьисене пулăшассине лайăхлатма каякан укçа-тенкĕ пирки уйрăмăн чарăнса тăрать.

Оратор вăрçă вăхăтĕнче перекетлĕх режимĕн пĕлтерĕшĕ ÿснине палăртать тата Финанс Халăх Комиссариачĕн контрольпе ревизи аппарачĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене критиклет.

Çакăнпа Союз Совечĕн ларăвĕ хупăнать. (ТАСС).

Национальноçсен Совечĕн ларăвĕ

Январĕн 29-мĕшĕнче каçхине Национальноçсен Совечĕн иккĕмĕш ларăвĕ пулнă.

Председатель сĕтелĕ умĕнче—Национальноçсен Совечĕн Председателĕ Н. М. Шверник депутат тата Национальноçсен Совечĕн Председателĕн заместителĕсем Ч. А. Аслановăпа М. Кулагин, ложăсенче—СССР Верховный Совет Президиумĕн членĕсемпе Правительство членĕсем. Депутатсемпе хăнасем вĕсене алă çупса кĕтсе илеççĕ.

Национальноçсен Совечĕн Председателĕ Н. М. Шверник депутат содоклад тума Национальноçсен Совечĕн Бюджет комиссине—И. С Хохлов депутата сăмах парать. Хохлов юлташ хăйĕн сăмахĕнче çапла калать: ССР Союзĕн 1944 çулхи государство бюджечĕ, правительство тăратнăскер, ирĕклĕхе юратакан пирĕн аслă халăха пусмăрлама шут тытнă гитлерла захватчиксене çывăх вăхăтрах пĕтерсе тăкмалли задачăсене тĕпĕ-йĕрĕпех пăхăнса тăни çинчен калать. Бюджет çавăн пекех халăх хуçалăхне малалла аталантарса пыма май парать, уйрăмах йывăр промышленноçа тата оборона промышленноçне аталантарма майсем туса парать.

Национальноçсен Совечĕн бюджет комиссийĕ,—тет Хохлов юлташ,—бюджета тĕрĕс тунă тесе йышăнчĕ тата бюджетăн СССР Правительстви çирĕплетнĕ тупăшсен пайне 4.010 миллион тенкĕ ÿстерме сĕнет, çав укçана СССР Совнаркомĕн резервлă фондне ÿстерпĕ çĕре яма сĕнет.

Депутатсемпе хăнасем Хохлов депутатăн юлашки сăмахĕсене тăвăллăн алă çупнипе кĕтсе илеççĕ.

— Аслă совет халăхĕн Хĕрлĕ Çарĕ аслă çулпуç тата полководец Сталин юлташ ертсе пынипе фашистла вăрă-хурахсене аркатса пырать тата вăл вĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех аркатса тăкĕ. Пирĕн Таван совет çĕршывĕ вăрçă кунĕ суранĕсене тÿрлетĕ, вăрă, Сталинла Конституци ялавĕпе—малалла, çутă пурнăç патнелле кайĕ.

Кун хыççăн Национальноçсен Совечĕ государство бюджетне сÿтсе явма тытăнать.

А. Казакпаев депутат сăмах илет. Вăл Отечественнăй вăрçа вăхăтĕнче Совет Союзĕнчи халăхсем пĕр боевой лагерь пулса пĕтĕçни çинчен калать. Казах халăхĕ вырăссемпе, украинецсемпе, белорусcемпе, грузинсемпе, узбексемпе, таджиксемпе тата хамăрăн çĕршыври ытти мĕнпур халăхсемпе аллаллăн тытăнса, хамăрăн Таван çĕршыв ирĕклĕхне, чысне тата никама пăхăнманлăхне хÿтĕлесе тăрать. Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче казах халăхĕн нумай ывăлĕсем хăйсене ĕмĕрхи чаппа витрĕç. Казах халăхĕ хăйĕн хуçалăхне аталантарас енĕпе те чаплă çитĕнÿсем турĕ.

—Сессине тăратнă бюджетăн проектне эпир пĕтĕмпех ырлатпăр,—тет Мускав хула Совет Исполкомĕн председателĕ В. П. Пронин юлташ.—Пирĕн хисеплĕ тивĕçлĕх—хамăрăн ĕçри хастарлăха ÿстересси, халăх хуçалăхĕн мĕнпур ресурсĕсемпе, майĕсемпе тата резервĕсемпе усă курса, фронта ытларах пулăшасси пулать. Пронин юлташ Мускаври ĕççыннисем пĕтĕм вăйхăвата хурса ĕçленипе государство бюджетне çирĕплетме пулăшни çинчен, тăшмана аркатса тăкма мĕн кирлине йăлтах туса пама пулăшни çинчен каласа панă.

Сессире пăхса тухма тăратнă бюджетăн проектне ырласа, Пронин юлташ тăшмана çĕнтерес сехете çывхартма совет тылĕн мĕнпур вăйĕсемпе тата майĕсемпе усă курма чĕнет.

А. Б. Бердыев депутат хăйĕн сăмахĕнче Советлă Туркменистанăн халăх хуçалăхĕпе культури аталанса пынине кăтартса паракан паха цыфрăсемпе фактсене илсе кăтартрĕ.

Бердыев депутат сессире пăхса тухма тăратнă бюджет совет тылĕнче вăй-хала шеллемесĕр ĕçлекен çынсемшĕн государство вăйлăн тăрăшнине кăтартса панине палăртрĕ.

Тутар Автономлă Советлă Социализмлă Республики чечеклене пынин, унăн çыннисем тылра вăя шеллемесĕр ĕçлени тата фронтра паттăррăн çапăçни çинчен Г. А. Динмухаметов депутат каласа пачĕ. Тутар ĕççыннийĕсем тăшмана аркатса тăкассишĕн тата тăшмана пĕтĕмпех çĕнтерессишĕн малашне те хăйсен вăйĕсене шеллесе тăмĕç.

ССР Союзĕн Сывлăха Сыхлав Халăх Комиссарĕ Г. А. Митерев юлташ хăйĕн сăмахĕнче Сывлăха Сыхлав Халăх Комиссариачĕн тата Хĕрлĕ Çарăн санитари управленийĕн госпиталĕсем аманнисенчен 70 процентне ытларах строя тавăрни çинчен пĕлтерчĕ. Вăрçă вăхăтĕнче медицина институчĕсемпе шкулсем 53.000 врач тата 100.000 вăтам пĕлÿллĕ медицина работникĕсем вĕрентсе хатĕрленĕ. Чирсенчен сыватас тĕлĕшпе ĕçлекен учреждениcен хисепĕ те ÿснĕ.

— Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче армян халăхĕн ывăлĕсем хăйсен авалхи тăванĕсен çапăçури традицийĕсене асра тытса, паттăррăн та хастаррăн çапăçаççĕ,—тет Л. Г. Осипян депутат.—Армени промышленноçть работникĕсем, производство планĕсене ялан тултарса тата ирттерсе тултарса пырса, çĕнĕрен татах 200 йышши продукци туса кăларма вĕренчĕç. Вăл хисепрен 100 йышши ытла продукцие вырăнти чĕртаварсенчен тăваççĕ. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене çĕмĕрсе тăкас тĕлĕшри пĕтĕм халăх задачине пурнăçа кĕртме тата промышленноçпа ялхуçалăхне, Совет Союзĕнчи пĕтĕм халăхсен культурине пур енĕпе те аталантарса пыма май паракан 1944 çулхи бюджета çирĕплетме сĕннине эпĕ пĕтĕмĕшпех ырлатăп.

— Государство бюджечĕ тăрăх каçалхи çул Оборона Халăх Комиссариачĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн комиссариатне паракан расходсем 128,4 миллиард тенкĕ пулмалли çинчен пĕлтерние эпир, депутатсем, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, хамăрăн çĕршывшăн савăннă туйăмпа кĕтсе илтĕмĕр, — тет И. С. Грушецкий депутат. Çак цыфрăра совет халăхĕн тăшмана хăвăртрах çĕнтерме мĕн кирлине йăлтах парса тăрас ĕçри ирĕкне кăтартса панă.

— Киргиз халăхĕ,—тет М. Токобаев депутат,—хăйĕн фронтри геройĕсемпе тата тылри чаплă ĕçĕпе тивĕçлипе савăнать. Отечественнăй вăрçă çулĕсенче Киргиз ССР-ĕн халăх хуçалăхĕн пур отраçлĕсем те нихăçанхинчен те ытларах аталанчĕç. Республикăра промышленноçăн çĕнĕ предприятийĕсене нумай туса пуçланă. Токобаев депутат республика бюджетне пир-авăр промышленноçне аталантарма 3.600 пин тенкĕ укçа хушса пама тата СССР наукисен академийĕн Киргиз республикинчи филиалĕн наукăпа тĕпчев ĕçне вăйлатма 400 пин тенкĕ укçа уйăрса пама ыйтать.

П. С. Прокконен депутат сăмах илет. Вăл аслă вырăс халăхĕ Карело-Финн ССР-ĕнчи халăхсене куллен пулăшса тăни çинчен калать.

Карело-Финн ССР-ĕнчи ĕççыннисем хамăрăн Тăван çĕршывăн обсронине çирĕплетессишĕн, халăх хуçалăхĕпе культурăна малалла аталантарса пырассишĕн татах та хастарлăнрах ĕçлĕç.

Прокконен депутат тухса каланă хыççăн Национальноçсен Совечĕн иккĕмĕш ларăвĕ хупăнать. (ТАСС).

Калининора кино мĕнле кăтартаççĕ

КАЛИНИНО. Район центрĕнчи клубра кашни икĕ-виçĕ кунтах кино кăтартаççĕ. Анчах клубра кино пулнă каç тĕпĕртетнине, вăрçнине çеç илтетĕн. Ку енчĕ киносене путлĕ кăтартманнинчен килет. 2-мĕш е 3-мĕш пайран кăтартма пуçлаççĕ те вĕçне çитермесĕрех пĕтереççĕ.

Клубра 3—4 çул каялла пичетленĕ картинăсем çеç çакăнса тăраççĕ. Урайĕнче çăрăк ÿсмелĕх тумхах хытса ларнă. Б. ШОРНИКОВ.

Ялсовет депутачĕсен отчечĕсем

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ йышăннă тăрăх, кăçал февралĕн 1-мĕшĕпе мартăн 1-мĕшĕ хушшинче ялсовет депутачĕсен суйлавçăсем умĕнче отчетсем туса ирттермелле.

Ялсовет депутачĕсен отчечĕсене ирттересси политика тĕлĕшĕнчен ответлă ĕç пулса тăрать. Отчетсем туса ирттерсе, ялсоветсен ĕçне — культурăпа хуçалăх строительствине тата çуракине ăнăçлăн ирттерессине ертсе пырас ĕçсене лайăхлатмалла. Çавăнпа та ĕнтĕ отчетсене пур енчен те лайăх хатĕрленсе ирттермелле. Райсовет исполкомĕсен председателĕсен отчетсем ирттерме ĕç планĕ туса, вĕсене кашни ялсовет патне çитермелле. Отчетсем ирттермелли плана мĕнле пурнăçа кĕртнине куллен тĕрĕслесе тăмалла, суйлавçăсем хушшинче массăлла ăнлантарулла ĕçе анлăн сарса пымалла.

Отчетсем ирттернĕ чухне отчетлă пухусене мĕнпур суйлавçăсене явăçтармалла тата пухусенче самокритикăна анлăн сарса ярса, ялсоветсен тата депутатсен ĕçĕсенчи çитменлĕхсене пĕтермелле. Çакна тума пуху пуласси çинчен суйлавçăсене чылай малтан пĕлтермелле, пуху ирттермелли çурт-йĕрсене малтанах тĕплĕн хатĕрлесе хумалла.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ ялсовет депутачĕсен отчечĕсене ирттерес тĕлĕшпе райсовет исполкомĕсене пулăшма Президиум членĕсене вырăнсене янă. Райсовет исполкомĕсен ялсоветсене пулăшма районри пĕтĕм совет активне мобилизацилес пулать.

Çуракине большевикла хатĕрленер

Бабушкин васкамасть...

«Гигант» колхоз председательне Бабушкина районра ĕçпе мар, хăйне кура пĕлеççĕ. Вăл, пысăк сухаллă патмар сарик, вăрăм чăпăклă чĕлĕмрен тĕтĕм мăкăрлантарса, йĕпхĕм хура рысакпа вĕçтерсе кăна çÿрет.

Анчах колхозсене кĕрсенех çак Бабушкинăн чапĕ пĕтсе ларать: «Итлемеççĕ мана колхозниксем, чылайранпа ĕçлетĕп те эпĕ, хăнăхса çитрĕç», ÿпкелешет вăл.

Чăнах та колхозниксем Бабушкина ăнланса çитнĕ: ĕç тума васкаман председатель вăл. Хăйĕн çине ытлашши шанать, патне çитсен те тăватăп, тет пулас.

Çуракине хатĕрленессипе те çавнашкал унăн. Председатель каланă тăрăх, колхозра вăрлăхсем çителĕклĕ. Счетовод çав вăхăтрах кантăр вăрлăхĕ, пăрçа вăрлăхĕ 22 центнер çитменни çинчен пĕлтерет. Колхозра çак вăхăта çитсе те вăрлăхсене сортлама тытăнман. Кÿршĕри «Колос» колхоз, «Гигант» колхозран ахаль ларакан триера илсе кайса, хăйĕн мĕнпур вăрлăхне сортласа пĕтернĕ. Лайăх тунă «Колос» колхозăн председателĕ Тямин юлташ, мухтамалла кăна. Бабушкин юлташăн Тямин юлташран пример илмелле.

Сăмах вăрлăхсене шăтарса пăхасси çине куçать.

— Чимĕр-ха, шăтарса пăхма леçнĕ-и çавсене?—ыйтать Бабушкин правленири çынсенчен.

— Бутылкăсем тупайман та, леçмен,—ответлет пĕр колхозникĕ.

— Çавна тупайман-и? Хам пата пырас...

Бабушкин вĕсем енчен аптăрамасть,—вĕсем унăн пушшисем пур вара.

«Гигантра» машинăсене юсама та тытăнман. Мĕнле лартнă, вĕсем çаплипех лараççĕ.

— Мĕн, тимĕрçĕ çук-им? Пур-ха вăл..

Тимĕрçи вара ăстаскер: Ленинградри пĕр пысăк заводра ĕçленĕ.—«Хушнă пулсан, халиччен эпĕ мĕнпур машинăсене юсаса пĕтереттĕм», каласа парать вăл. Тимĕрçĕ ĕç çук пирки ÿпкелешет.

— Вырăнти удобренисене хатĕрлессипе мĕнле?

— 513 лав тислĕк кăларнă.

Чăннипе ăна иртнĕ кĕркуннех кăларнă, хĕле кĕрсен çураки валли тислĕк турттарас тесе лаша та кÿлмен вара.

— Кĕлпе кайăк-кĕшĕк тислĕкне пухнă пуль ĕнтĕ?

— Вĕсене çуркунне пухатпăр.

— Мĕн тунă-ха вара çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе,—нимĕн те туман вĕт?

— Çапла тухать пек.. Но вăл,—калать малалла председатель,—ытти çĕрте те çавах пулĕ...

Бабушкин халех хускалма шутламасть, патне çитессе кĕтет. Председатель хускалманнине кура, колхозниксем пикенсе ĕçлемеççĕ. Колхозри ĕçлеме пултаракан 120 çынран 37-шĕ ноябрьпе декабрь уйăхĕсенче пĕр ĕçкунĕ те туман.

Патне çитессе кĕтмелле мар, çуракине халех тимлĕн хатĕрленсе çитмелле.

Т. ИВАНОВ, (Хамăр корр.).

Чуракасси ялĕ. Сĕнтĕр районĕ.

Филипп Лукин композиторăн радио-концерчĕ

Январĕн 27-мĕшĕнче радио илтекенсем чăваш композиторĕн Ф. М. Лукинăн творчествипе паллашрĕç. Филипп Миронович Лукин Шупашкарта Чăвашсен музыка шкулĕнче вĕреннĕ чухнех юрăсем çырас ĕçе тытăннă. Вăл чăвашсен паллă композиторĕн Ф. П. Павловăн, В. П. Воробьевăн, И. М. Кривоносовăн вĕренекенĕ пулнă. Ф. П. Павлов пуçарса янă кружокра тăнă.

1930—31-мĕш çулсенчех унăн юррисем пичетленме пуçланă, вĕсене Чăвашсен Государственнăй хорĕ юрлама тытăнать. Ун чухне Лукин хăй те çак хорта юрланă, халĕ вăл çав коллективăн — Чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕн художество енĕпе ертсе пыраканĕ пулса ĕçлет.

Вăл 1942 çулта музыка аслă шкулĕнчен—Мускаври консерваторирен вĕренсе тухрĕ. Ф. М. Лукин творчество ĕçне тытăннăранпа пурĕ 50 юрă ытла — хорпа юрламалли, массăллă юрăсем, ачапăча юррисем, пĕччен юрламалли, скрипкăпа юрламалли юрăсем çырнă.

Унăн юррисем чăваш халăх музыкипе тачă çыхăнса тăраççĕ. Лукинăн юрлама çăмăл, кăмăла çĕклентерекен кĕввисем чăваш совет музыкинче паха вырăн йышăнаççĕ.

Концертра Лукин кĕвĕленĕ юрăсене юрласа пачĕç. Вĕсенчен 4-шĕ хорпа юрламалли юрăсем, 2 юрри—соло валли пĕччен тухса юрлама çырнă юрăсем, дуэт тата скрипкăпа калама çырнă элеги. Юррисем пурте çĕнĕ, вĕсен сăмахĕсене чăваш поэчĕсем И. Тукташ, В. Хударсем, М. Ястран, А. Эсхель, А. Кăлкан çырнă.

Хорпа юрламалли юрăсене Чăваш радиокомитечĕн юрă ансамблĕ (хĕрарăм хорĕ) юрласа пачĕ, ытти юррисене те çав коллективра тăракансемех юрларĕç.

Концерт программинче пуринчен ытла скрипка валли çырнă элеги кăмăла кайрĕ. Скрипкăпа каланă Ходяшев юрă кĕввине çепĕççĕн те питĕ ăстан янратнă хушăра рояль сасси юррăн тĕп кĕввине çĕклентерсе пычĕ. «Шурă роза» юрă (сăвви Илья Тукташăн) тата «Тухрăм Атăл хĕррине» тесе пуçланакан юрă (çамрăксен юрри) питех те килĕшрĕç.

Радио тăрăх илтĕнессе те питĕ аван илтĕнчĕç вĕсем. Анчах концертра юлашкинчен юрланă юрă —«Çапăçу юрри» (сăвви А. Эсхелĕн) çемçерех тухрĕ. Ăна хутăш хорпа юрлаттарас килет. Арçынсен сассисем çуккипе, çителĕклĕ таран уççăн та тĕреклĕн янăраманнипе, сăвă сăмахĕсенчи кĕрешÿ вăй-халне кăтартмалли кĕвĕ черченкĕрех илтĕнет.

Пĕччен юрласа панă юрăсем те чылаях илемлĕ. Анчах та соло юрлаканĕпе (З. Трофимова юрларĕ) аккомпанимент пĕр пек виçепе пыманни, хушăран аккомпанимент пачах та илтĕнми пулса юлнине палăртас пулать. Çавнашкалах «Хĕрлĕ çарти туссене» юрă та (дуэт) начартарах тухрĕ.

Пĕтĕмĕшпе илсен, ку концерт чăваш совет музыки çĕнĕ произведенисемпе пуянланса пынине, музыка ĕçне хутшăннă çамрăк юлташсем малалла вĕренсе, хăюллăн ÿссе пынине кăтартса пачĕ. Ф. М. Лукин музыки чăн-чăнах кăмăла çĕклентерекен, оптимизмлă музыка. Вăл хăйĕн пултаруллăхне татах та ÿстерсе пырассине шантарать.

Композитор Лукин халĕ «Чикĕре», «Кĕтетĕп эп сана» ятлă çĕнĕ юрăсем çырать, Ф. П. Павловăн «Ялта» пьесси валли юрă кĕввисене музыка енĕпе йĕркелес тĕлĕшпе ĕçлет.

Чăваш радиокомитечĕ, çакнашкал концертсем парса, чăваш композиторĕсен пурнăçĕпе тата хальхи вăхăтра çыракан юрри-кĕввисемпе паллаштарма тытăнни—ырлама тивĕçлĕ ĕç. Чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕн концерчĕсене те радио тăрăх тăтăшах парса тăрсан, тем пекех аванччĕ.

Н. ВАСЯНКА, Г. ХИРБЮ.

Монголи халăх республикин премьер-министрĕ маршал Чойбалсан Мускавран тухса кайни

Январĕн 29-мĕшĕнче Мускавран Улан-Батор хулине Монголи халăх республикин премьер-министрĕ маршал Чойбалсан тухса кайнă.

Вокзалта Чойбалсан маршала Ют Çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ В. Г. Деканозов, ВОКС Правленийĕн Председателĕ В. С. Кеменов, çавăн пекех тата Монголи халăх республикин Совет Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй посланникĕ Самбу т. ыт. те ăсатса янă.

Ют çĕршывсенче

„Çак вăрçăри чи лайăх операцисенчен пĕри"

ЛЕНИНГРАДА ТĂШМАН БЛОКАДИНЧЕН ИРĔКЕ КĂЛАРНИ ÇИНЧЕН АНГЛИРИ РАДИО КАЛАНИ

ЛОНДОН, январĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио хăйĕн передачисенче Ленинград фронтĕнчи çарсем наступлени туни çинчен нумай калать. Нумай обзорсемпе комментарисенче вăл наступлени çар тĕлĕшĕнчен пысăк вырăн йышăнни çинчен, совет боецĕсен паттăрлăхĕпе командованин мастерлăхĕ çинчен калаççĕ.

Лондонри радио Ленинград фронтĕнчи çар Ленинграда тăшман блокадинчен тĕпренех хăтарни çинчен панă приказа анлăн сарнă.

Ленинград блокадине татнă,—тенĕ Лондонри радиопередачăсенчен пĕринче,—Ленинграда хупăрласа тăракан, ăна икĕ çул хушши сывлама чăрмантарнă тăшман ункине татса пăрахнă. 324 тупăпа 24 хут пĕр харăс персе, паттăр салтаксене, моряксене тата Ленинград рабочийĕсене саламланă. Вăл—çĕнтерÿ салючĕ пулчĕ.

Лондонри радио çакна асăрхаттарать: 1941 çулхи ноябрьте каппайчăк Гитлер çапла каланăччĕ: Ленинград блокадине никам та татма пултараймасть, кам та пулин çавна тума хăтланса пăхас пулсан, нимĕç çарĕсем хулана штурмласа тытса илеççĕ, тенĕччĕ. Хупăрласа илнĕ Ленинград пăрăнатех, тетчĕ ун чухне Гитлер. Анчах та, тенĕ Лондонри радиопередачăра, Сталин ячĕпе тăракан хула пирки йăнăшнă пекех, Гитлер Ленин ячĕпе тăракан хула пирки те йăнăшрĕ.

Радиокомментатор Хейстингс çакна палăртать: кăçалхи январĕн 17-мĕшĕнче гитлерла радио фронтăн Ленинградпа Волхов участокĕсенче Германи çарĕсен позицийĕ пырса кĕмелле мар тĕреклĕ, вырăссен кирек епле наступленине те нимĕç çарĕсем сирсе ярĕç, тесе мухтаннă пулнă. Хĕвелтухăç фронтĕнчи нимĕç сборонин çав чи хытă майăрне Хĕрлĕ Çар шĕкĕлчеме пултараймĕ, тесе сÿпĕлтетнĕ гитлеровецсем. Анчах паян,—тет комментатор,—Хĕрлĕ Çар чаçĕсем çав майăра шĕкĕлчерĕç, çав çĕнтерĕвĕн результачĕсем вара нимĕçсемшĕн çав тери йывăр пулчĕç».

„Пĕтĕм Совет çĕршывĕ Ленинград патĕнчи çĕнтерÿшĕн савăнать"

ЛЕНИНГРАД ФРОНТĔНЧИ ÇАРСЕН ВĂРÇĂРИ ÇИТĔНĔВĔСЕМ ÇИНЧЕН США-ра МĔН ÇЫРАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрлĕ Çар Ленинград фронтĕнче паттăррăн наступлени туса пыни çинчен Америка хаçачĕсем тата радио нумай калаçаççĕ.

«Пирĕн вырăс союзниксем,—тенĕ Сан-Францискоран панă радиопередачăра,—çĕнĕрен пысăк çĕнтерÿ турĕç. Иртнĕ çулта нимĕçсем Курск çине наступлени тунине ăнăçлăн сирсе пăрахса, вырăссем тăшмана хирĕç хăйсем наступлени пуçласа ячĕç. Наступление куçнă нимĕç çарĕсене темиçе кун хушшинче аркатса тăкрĕç. Çавăнтан пуçласа, совет çарĕсем нимĕçсене пысăк çухату кÿрекен çав тери ăнăçлă наступлени туса пыраççĕ. Анчах нимĕçсем юлашки вăхăтченех Ленинград хулине хупăрласа тăнă. Нумай пулмасть унта та совет çарĕсен наступленийĕ пуçланчĕ, вăл наступлени хулана хăрушлăхран тĕппипех хăтарчĕ. Гитлеровецсене Ленинград патĕнчен ывăтса янă, вĕсем Ленинград çине персе тăнă нумай тупăсене вырăссем тытса илнĕ.

Суинг комментатор каланă тăрăх, Ленинград фронтĕнче совет çарĕсем татса тухни çарпа стратеги тĕлĕшĕнчен кăна мар, шухăш-кăмăл енчен те питĕ пысăк çĕнтерÿ пулса тăрать. Суинг çакна палăртать: нумай миллионлă çав хула, нумай вăхăт хушшинче бомбăсем пăрахнине, хула çине персе тăнине, выçлăха, чир-чĕре паттăррăн тÿссе ирттернипе уйрăмăнах палăрса тăрать. Тамăкри пек çав условисенче Ленинград çыннисем хулана ирĕке кăларассине шанса тăрса, хăйсен ĕçне пĕр чарăнмасăр туса пынă. Ленинград çыннисем пĕтĕм çĕршывпа пĕрле пĕр пурнăçпа пурăннă, ытти фронтсенчи çитĕнÿсемпе савăннă, халĕ пĕтĕм çĕршыв Ленинград патĕнчи çĕнтерÿшĕн савăнать».

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен тĕп ставки çапла пĕлтерет: ĕнер союзниксен йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем тăшманăн Монпельери, Истри тата Салонри (Франция) аэродромĕсене тапăннă. Нумай бомбăсем ангарсене тата вĕçсе хăпарса анса лармалли площадкăсене тÿрремĕнех пырса тивни паллă пулнă. Бомбардировщиксем Вăтам Италири çар объекчĕсене тапăннă.

Кун каçиччен союзниксен авиацийĕ, пĕр самолет çеç вĕçнĕ шутпа шутласан, 1.400 хут вĕçнĕ.

Французсен чаçĕсем Кассинăран хĕвеланăçнерехре, тăшман хытă хирĕç тăнине çĕмĕрсе, çаплах малалла куçса пыраççĕ.

Американецсен чаçĕсем Рапидăран хĕвеланăçнерехре, тăшман вăйлăн персе тăрать пулин те, тусен айккипе çаплах малалла куçса пыраççĕ. Акăлчансен тата американецсен чаçĕсем хăйсен Римран кăнтăртарахри плацдармне аслăлатнă. Нимĕçсем акăлчансен чаçĕсене хирĕç пысăк контратака пуçласа янă. Акăлчансем контратакăна сирсе янă, нимĕçсене тыткăна нумай илнĕ. Англин 8-мĕш армийĕн фронтĕнче çаплах патрульсем тытăçа-тытăça илеççĕ.

ЛОНДОН, январĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен тĕп ставки çапла пĕлтерет: Англин тинĕс-çар флочĕн карапĕсем Америкăн 5-мĕш армине Анцио секторĕнче çаплах хăватлăн пулăшса тăнă. Англин çар карапĕсем çинчи артиллери, вăйлăн тата тĕрĕс персе тăрса, нимĕçсен батарейисене пусарса лартнă, тăшман çарĕсене çулсем тăрăх куçма кансĕрленĕ, тăшмана çухатусем кÿнĕ тата унăн транспортне сиен тунă. Ку секторта артиллери сĕм тĕттĕм пуличченех хытă персе тăнă.

Союзниксен авиацийĕ çаплах тăшман аэродромĕсемпе чугун çулĕсене тапăннă. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 36 самолетне персе ÿкернĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ БЕРЛИНПА ФРАНКФУРТ ХУЛИСЕНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, январĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Ланкастер» йышши бомбардировщиксен пит пысăк соединенийĕ Берлина атакăланă. Малтанлăха илнĕ сведенисем тăрăх, хула çине питĕ нумай бомба пăрахнă. Чи вăйлăн тапăнни хыççăн пĕр сехет иртсен, Берлин çине «Москито» йышши самолетсем вĕçсе çитнĕ. Çав самолетсем çинчи летчиксем тем таккиш вырăнта вăйлă пушарсем кĕрленине курнă.

Ытти соединенисем Гельголанд утравĕ çинчи, Хĕвеланăç Германири тата Çурçĕр Францири объектсене атакăланă. Англин 34 самолечĕ хăйсен базисене таврăнман.

ЛОНДОН, январĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: январĕн 29-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Германие тапăннă. Вĕсем каллех пуринчен ытла Берлина аркатнă. Питĕ нумай бомба пăрахнă. Вăйлă пушарсем тухнă.

Хăйсен базисене 47 бомбардировщик таврăнман.

Паян кăнтăрла американецсен 800 йывăр бомбардировщикĕ ытла Франкфурт хулине тапăннă.

Пĕлтерÿ

Ыран, февралĕн 2-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче агитколлективсен руководителĕсем, пропагандистсем, агитаторсем тата беседчиксем валли лекци пулать. Лекци темиĕ:

„Вăрçăсен историйĕнчи Сталинград патĕнче пулса иртнĕ чи хăватлă çапăçу çинчен".

Лекцие ВКП(б) Обкомĕн лекторсен ушкăнĕн руководителĕ И. Ф. Сергеев юлташ вулать.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 6—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00021 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59×42 п. л Тираж 14.400 экз.